**Салху çурçĕртен...(сăвă)**

Салху çурçĕртен
Хура пĕлĕтсем
Тĕпе-хĕррисĕр
Мăкăрланаççĕ.
Пĕри-пĕринчен
Айĕ-çийĕнчен
Амăртмалла пек
Иртсе каяççĕ.

Çилленнипеле,
Хурланнипеле
Вĕсем çĕр çине
Куççуль тăкаççĕ.
Тен, куççулĕ мар, —
Васканипеле
Вĕсем сивĕ тар
Юхтараççĕ.

Сиввĕн, сив куçпа,
Чуна хăратса,
Кăмăл пăтратса
Пăхса илеççĕ.
Вĕсем пăхнипе
Ешĕл курăксем
Пĕтĕм тĕнчипе
Ӳксе вилеççĕ.

Паттăр хăвасем,
Çĕлен сăхнă пек,
Авкаланаççĕ,
Пуçне таяççĕ.
Вĕсен çулçисем,
Сив чир тытнă пек,
Сап-сар саралнă,

Вĕлтĕртетеççĕ.

Нӳрлĕ çĕр çине
Вĕçсе анаççĕ,
Сивĕ пылчăкра
Çĕрсе выртаççĕ.
Сĕмсĕр ача-пăча
Таптать вĕсене.
Пĕлмест хăй çапла
Хĕн курассине.

Сисмест, ĕмĕрте
Çитет кĕркунне,
Туймасть малашне
Пулас инкекне.
Хурлăх пуласса
Чĕри ун сисмест,
Хыпса çунасса
Çамрăк чун пĕлмест.

*Тал-Мăрса, Г. Салху çурçĕртен…: [сăвă] / Г. Тал-Мăрса // Тал-Мăрса Г. Хĕрлĕ çар çыннин юрри: сăвăсем, калавсем, пьесăсем / Г. Тал-Мăрса; [В. Ахун, В. Станъял пухса хатĕрл.]. - Шупашкар,1975. – С.34-35.*